# Халăх мухтавĕ

Ленинградра XVIII ĕмĕрте лартнă Çуллахи сад пур. Ăна чапа кăларакканни—унăн тĕлĕнмелле карти. И. Э. Грабарь академик çав карта çинчен акă мĕн çырса хăварнă: «Пĕтĕм Европăра эпир ун пек карта тупаймастпăр. Ăна тĕлĕнмелле туса лартнă. Вăл çав тери илемлĕ, ытараймм капăр. Унра хаваслăх çиçсе тăрать».

Ăна Кĕтерне патша чухне, сада ахаль çынсем кĕрсе ан çўреччĕр тесе, тутарнă. Историксемпе искусствăна тĕпчекенсем хушшинче, мĕн юлашки вăхăтченех темелле, çак карта авторĕ пирки тавлашу пынă. Чылайăшĕ ăна ют патшалăхран килнĕ архитектор-художниксем тунă, тесе шутланă.



**ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: П. Е. Егоров архитектор.**

Пурăна-киле Кĕтерне патшан хуралт тăвакансен архивĕпе паллашнă çынсем карта проекчĕн варианчĕсене, чертежĕсене тупаççĕ. Вĕсем хушшинче хуралт тăвакансен пуçлăхĕ, нимĕç архитекторĕ Юрий Матвеевич Фельтен пĕччен алă пуснисем те, Петр Егорович Егоровпа пĕрле алă пуснисем те пулнă. Çавăн пирки, нумаях та пулмастчĕ-ха, Ленинградра тухнă альбомсенче е открыткăсенче карта проектне Фельтенпа Егоров иккĕшĕ пĕрле тунă тесе кăтартатчĕç. Юлашки вăхăтра Ленинградри искусствоведсем Р. Люлинапа Э. Кузнецова архивсенче тепĕр хут, тĕплĕнрех тĕпчесе тухса, татăклăнах çапла калаççĕ, чаплă картан пĕртен-пĕр авторĕ Петр Егорович Егоров пулнă. Вĕсем çакна кăтартса панă: Фельтен хăй тума хăтланнă чертежсене пăрахăçланă. Ĕçе кĕнĕ проектсем çине Егоровран çўлерех Фельтен алă пуснă пулсан, вăл ним те мар—Фельтен, хуралт кантурĕн пуçлăхĕ пулса, Егоров проектне йышăннине кăна пĕлтерет.

Эппин, кам пулнă-ха вăл çав ăслă архитектор Петр Егорович Егоров? Мĕнле майпа вăл Хуралт кантурĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ пулнă?

П. Е. Егоров чăвашран тухнă. Хăйĕн пурнăçĕ çинчен вăл ялан тенĕ пекех çапла çырать: «Эпĕ чăваш йăхĕнчен». Хăш чинсенчен, тесе ыйтакан анкетăра çапла каланă: «Çĕнĕ тĕне кĕнĕ чăвашсенчен».

Ĕлĕк П. Е. Егоров хăçан çуралнине те татса калайман, мĕншĕн тесен, тĕрлĕ документра тĕрлĕрен çырнă. Халĕ çакă паллă: вăл 1731 çулта çуралнă. Анчах хăш уйăхра, хăш кун — тупса палăртайман, мĕншĕн тесен, ăна вăл хăй те астăвайман, хура пўртре пурăнакан, çырма пĕлмен чăвашсен метрика кĕнеки те пулман. Çапах эпир çапла ĕнентерсе калама пултаратпăр: чăваш архитекторĕ П. Е. Егоров çуралнăранпа 250 çул çитрĕ.

Аçтан-ха вăл, Питĕр хулине мĕнле çитме пултарнă? Аçта çуралнине тупма май та çук пуль, мĕншĕн тесен, грузин княçĕ Дадиани чăваш ачине пĕчĕккĕ чухнех, тен, ыйткаласа çўренĕ чухне, хăй килне илсе кайнă. Дадиани улпут çĕрĕ Чулхула кĕпĕрнинчи Етĕрнерен инçех мар уессенче пулнă. Тен, княç çав ачапа кунти ялсенче тĕл пулнă. Чăваш хресченĕсен ачипăчине сутас йăла пулман. 1733 тата 1742 çулсенче çав таврана хаяр выçлăх çаврса илнĕ. Çавăнпа çамрăксене ирĕксĕрех çăкăрлă ялсене ыйткалама янă. Çав çулсенче лекнĕ те ĕнтĕ Петр Егорович Дадиани княç патне. . .

Петр I патшара чухне Грузири хăшпĕр княçсем, вырăс патшалăхне куçса килсе, патшапа туслашса, çĕр туянса, яланлăхах кунта юлнă. Дадиани чăваш ачине хăйĕн çемйине йышăннă хыççăн, Христос тĕнне йышăнтарса, чиркўре çĕнĕ ят парать. Унччен мĕнле ятлă пулни паллă мар. Э. Ф. Кузнецова хăйĕн çамрăксем валли çырнă «Мальчик из Присурья» кĕнекинче (1971) чăваш ачин килти ячĕ Юман пулнă пек çырнă, ку вăл — кĕнеке авторĕ хăй панă ят.

Унччен княçăн пĕр ывăл пулнă — Петр ятлăскер. Ашшĕ — Егор Леонтьевич. Пĕр ывăллă улпут-грузинсен йăли çапла пулнă: пĕр ача вилес-тăвас пулсан, ун вырăнне тепĕр ача юлмалла. Çапла вара, Дадиани çемйинче икĕ Петр Егорович ўснĕ. Чăваш ачи çырма, шутлама, ўкерчĕксем тума вĕренет, ўссе çитсен княç ăна малалла вĕренме архитекторсен шкулне кĕртет. Петр Егорова архитектор ăсталăхне вĕрентекенсем хушшинче чи паллăраххи вырăс архитекторĕ Семен Артемьевич Волков пулнă. Вăл пулăшнипе П. Е. Егоров 1755 çулхи апрельте патшан Хуралт кантурĕнчи архитекторсен командинче пулать. Каярахпа Кĕтерне патша кантурта икĕ архитектор кăна хăварать: архитектор ятне илнĕ Фельтона, заархитектор ячĕпех юлнă Егорова. П. Е. Егоров вырăс хĕрне Анна Филипповнăна качча илнĕ.

Халĕ ĕнтĕ пĕр иккĕленмесĕр çакна палăртас пулать: П. Е. Егоров Çуллахи сад картин авторĕ кăна мар, Мрамор керменĕн (унта халĕ Ленин музейĕ) авторла прорабĕ те, «Иордань» павильонăн проект чертежĕсене тăваканĕ те. Пескири Рождественски,Эстонири Пярну хулинчи Екатеринински чиркўсен проекчĕсен авторĕ П. Е. Егоров пулни тахçантанпах паллă.

Кунта П. Е. Егоровăн пĕтĕм ĕçĕсем çинчен тĕплĕ калаймăпăр. Кĕскен те пулин Çуллахи сад картине хăçан тата епле туса лартнине палăртасшăн.

1778—1784 çулсенче чĕртежсемпе сметăсене туса çитерсен, чугун юхтарса карта хатĕрлемешкĕн ăстасене тара тытмалла пулнă. Карта тăрăхĕсем тума Тула хулинчи завод хуçисем кĕрĕшеççĕ. Çав вăхăтрах йĕс детальсем тăвас тĕлĕшпе паллă ăстаçă Ф. Дункер ĕçлет. 1786 çулта, Петр Егоров кăтартса панă тăрăх, карта çинчи вазăсемпе урнăсене ылтăнпа сăрласа капăрлатаççĕ.

Карта тăвас ĕç 16 çула пынă, 1784 çулта вĕçленнĕ. Ăна тума хысна 87238 тенкĕ те 37 пус тăкакланă.

1785 çулта П. Е. Егоров Мрамор керменне тăвассине вĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна 800 тенкĕ награда параççĕ. Сад картине туса çитернĕ тĕле, 1784 çулхи март вĕçĕнче, вăл надворнăй советник чинне илет, çарти шутпа ку чин подполковникпа танлашать. Хуралт кантурĕн пуçлăхĕ пулма И. Е. Старова лартнă хыççăн, 1787 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче, вăл çапла рапорт парать: Петр Егоров наградăна, архитектор чинне илме тивĕç.

Анчах вăл çав чина кĕтсе илеймен, ăна архитектор тума кантурăн пушă вырăн çук, тесе тытса тăнă. Чăннипе калас пулсан, П. Е. Егоров ун чухне хăйĕн ĕçĕпе кирек хăш архитектортан та кайра пулман. Çавăнпа 1789 çулта çулталăк шалăвне 750 тенке çити ўстермелле тунă. Çав çул П. Е. Егоров пурнăçĕн юлашки çулĕ пулнă. Майăн 12-мĕшĕнче вăл госпитальте яланлăхах куçне хупнă.



**ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: П. Е. Егоров проекчĕпе тунă Ленинградри Çуллахи садăн карти.**

Паллах, патша саманинче халăх хушшинчи талантсен кунçулĕ йывăр пулнă. П. Е. Егоров тĕрлĕ халăх çыннисем пулăшнипе вутчул витĕр шăтса ўснĕ чечек пек туйăнать. Вăл туса хăварнă палăксем ун сăвапне нумай-нумай ĕмĕрсем упрĕç.

**И. КУЗНЕЦОВ,**
**истори наукисен докторĕ.**